## Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ:

# «Маншăн кашни чăваш çыравçи хаклă»

Василий Иванович Давыдов-Анатри ятне пĕтĕм чăваш тĕнчи пĕлет. Çитмĕл çул ĕçлет вăл тăван литература каçалăкĕнче. Çак хушăра 50 кĕнеке пичетлесе кăларчĕ, вăл çырнă сăвăсемпе чăваш композиторĕсем 500 ытла юрă кĕвĕлерĕç. Вĕсем хушшинче пĕччен, иккĕн, ансамбльпе тата хорпа юрлама çырнă произведенисем пур. Композиторсене уйрăмах унăн туслăхпа юрату, Тăван çĕршыв тата Шупашкар çинчен çырнă сăввисем килĕшеççĕ. Ку сăвăсенче поэт халăх пултарулăхĕнчи чи лайăх йăла-йĕркесене тытса пырать. Ĕçри паттăрсене мухтаса юрлать. Çакна халăхра анлă сарăлнă юрăсенче лайăх туятпăр: «Çĕршывăм-анне», «Чечекленет çĕршывăм», «Çĕршыв илемлĕ», «Мирпе туслăх юрри», «Кашмаш каччи», «Каçхи илем» т. ыт. те. Унăн сăввисене вырăс, украин, тутар, пăлхар, туркмен тата ытти халăхсен чĕлхисене куçарса кун çути кăтартнă.

«Кашни халăхăн, хăйĕн историне кура, уйрăм сăн-сăпат, тум-эреш, сăвă-юрă. Этемлĕхе темĕн пысăкăш чечек çыххипе танлаштарсан, кашни халăх унта хăйне евĕр пĕр чечек пулса кĕрет... Ĕлĕкхи чăваш юрри «Çырмари юрă» пулнă. Хальхи юрă халăхпа пĕрле çырмаран ту çине улăхрĕ», – çырнă хăй вăхăтĕнче Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай. Çырмаран – ту çине! Апла пулсан чăваш юррине çӳллĕ ту çине хăпартнă чухне Василий Давыдов–Анатрин тӳпи те калама çук пысăк пулнă.

Пулас сăвăç 1917 çулхи раштав уйăхĕн 26-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Аслă Арапуçĕнче (хальхи Первомайскинче) вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Унăн ашшĕ-амăшĕ, ялти ытти çынсем пекех, хутла пĕлмен. Анчах та хăйсен ачисене вĕрентес, пурнăç çулĕ çине çирĕп тăратас ĕмĕтпе пурăннă. Хăйĕн ачалăхĕпе çамрăклăхĕн çулĕсем çинчен В.И.Давыдов-Анатри «Сатин кĕпе» автобиографилле повеçĕнче тĕплĕн çырса кăтартнă. Ăна поэт кĕçĕн çулхи ачасем валли çырнă. Повесть пĕчĕк калавсенчен тăрать. Кашни калавĕнчех Аслă Арапуç ялĕ, шкул ачисем, колхоз пурнăçĕнчен илнĕ пĕр-пĕр эпизод. Шкулта «Маяк» ятлă стена хаçачĕ кăларни, пĕрремĕш сăвă çырни, яла трактор килни, литературăри малтанхи юлташĕсем – çак пулăмсем пурте ун биографийĕпе çыхăннă.

ĔМĔР САККИ

Пĕррехинче, каçхине, Аслă Арапуç шкулне ялти комсомолецсемпе çамрăксен концертне Митта Ваçлейĕ пырать. Часах ял-йыш ыйтнипе вăл сцена çине хăпарса тăрать, хăйĕн сăввисене вуласа парать. Пурте тăвăллăн алă çупаççĕ.

*«Концерт малалла пырать. Ялти çамрăксем пĕрин хыççăн тепри сăвă, юптару вулама тытăнчĕç. Манпа пĕрле вĕренекен Марине хăйĕн уçă та илемлĕ сассипе «Вĕлле хурчĕ – ылтăн хурт» юрра шăрантарчĕ. Черет ман пата çитсен эпĕ Петĕр Хусанкай çырнă «Ирĕк тимĕрçĕ» сăвва хавхаланса вуласа патăм:*

*Вăйлă кăкăрăм*
*Çăмăллăн сывлать.*
*Хăнăхнă аллăм*
*Пĕрмаях шаккать...*

*Итлекенсене эпĕ сăвă вулани кăмăла кайрĕ пулас, вĕсем хыттăн алă çупса ячĕç.*

*Концерт вĕçленсен Митта Ваçлейĕ мана хăй патне чĕнсе илчĕ те:*

*– Маттур эсĕ, Ваçлей шăллăм, пултаратăн. Кун çинчен, Шупашкара çитсен, Хусанкая хăйне каласа паратăп ĕнтĕ, – терĕ». Çапла вĕçлет çак кĕнекери «Сăвă юрă янăрать» калавне автор.*

«Чун хĕлхемĕ» калавра вара Василий Давыдов-Анатри литературăри хăйĕн пĕрремĕш утăмне çырса кăтартнă:

*«Митта Ваçлейĕн шăллĕсем Петĕрпе Иван, Яккупа Микула, Санюк йăмăкĕ – пурте ман туссем пулнă... Митта Ваçлейĕн Якку ятлă шăллĕ манпа пĕрле вĕренетчĕ. Вăл, пиччĕшĕ пекех, сăвăсем хайлатчĕ. Вăл çырнă йĕркесем шăрçа пек пулса пыратчĕç. Шкулта пире асăрхарĕç пулас, «Маяк» ятлă стена хаçачĕ кăларма суйларĕç. Якку – сăвăç, эпĕ – художник, Иван – çыравçă. Хаçат уйăхра пĕрре тухатчĕ. Илемлĕ, лайăх кăлараттăмăр ăна. Пĕррехинче эпĕ те, Яккуран курса, çуркунне çинчен çĕрĕпе сăвă хайларăм:*

*Çўлте, тўпере*
*Сар хĕвел хĕртет.*
*Умра – çуркунне,*
*Шур юр ирĕлет...*

*Сăвă аван пек туйăнчĕ. Ăна хам тантăшсене, шкул ачисене, кăтартрăм. Сăвва вĕсем те килĕштерчĕç, стена хаçатне пама хушрĕç. Ку вăл ман малтанхи чун хĕлхемĕ пулчĕ пулас. Çав хĕлхеме сўнме памарăм вара. Эпĕ тăван чĕлхене, тăван литературăна ачаран питĕ юраттăм. Константин Ивановпа Çеçпĕл Мишши, Петĕр Хусанкайпа Митта Ваçлейĕ, Уйăп Мишшипе Илле Тукташ, Яков Ухсайпа Нестер Янкас тата ытти поэтсем çырнисене касса кайса вулаттăм, вĕсем майлă çырма тăрăшаттăм. Ача чухне мĕн чухлĕ хут вараламан пулĕ! Малтан мĕн çырни пурте кăмăла кайнăн туйăнатчĕ. Пурăна киле сăвăсене районта, Шупашкарта тухса тăракан хаçат-журналсен редакцийĕсене яма пуçларăм. Анчах пур çĕртен те: «Сăввусем пиçсе çитмен, пичетлеме пултараймастпăр», – тесе çырнă çырусем килетчĕç. Мĕн чухлĕ хуйхăрман, мĕн чухлĕ кулянман пулĕ эпĕ çакăншăн. Анчах ним тума та çук: каллех хут варалама, сăвă çырма ларатăн.*

*Пĕрре эпĕ, хам çырнă сăвăсене пухса, районта тухса тăракан «Коммунар» хаçат редакцине илсе кайрăм. Редакцинче ĕçлекенсем мана ăшшăн йышăнчĕç. Хаçат редакторĕ Петр Афанасьевич Жданкин мана хăй çумне лартрĕ те эп çырнă сăвăсене вулама пуçларĕ, хăй кашни сăвва вуламассерен вăрăммăн сывласа илет. Эпĕ Петр Афанасьевич мĕн каласса чун-чĕререн кĕтсе ларатăп. Юлашкинчен редактор:*

*– Вăтăр сăвă вуласа тухрăм акă, хаçата яма юрăхлине вара пĕрре те тупаймарăм, – терĕ те мана сăвă çинчен ăнлантарса пама пуçларĕ.*

*Ăшă сăмах, вĕрентсе каланă сăмах усăллă пулчĕ ахăр. Эпĕ, киле таврăнсанах, хутпа кăранташ илтĕм те каллех сăвă çырма лартăм. Пуçа темле шухăш та пырса кĕрет. Кĕркунне çинчен те, хĕлле çинчен те, пурин çинчен те çырас килет. Йĕри-тавра çаврăнса пăхрăм та – куç умне çуллахи илемлĕ кун тухса тăчĕ.*

*Хĕрӳ ĕç вăхăчĕ. Çавăнтах редактор хама: «Ху лайăх туйса, пĕлсе тăракан ĕç çинчен çырмалла», – тени аса кичĕ. Эпĕ çуллахи ял çинчен çырма шутларăм.*

*Нумай тертлентĕм, темле те çырса пăхрăм, анчах сăвă хама пĕрре те çырлахтармасть. Юлашкинчен çапах та вăл картине ларнă пек туйăнчĕ. Ăна темиçе хут вуласа тухнă хыççăн «Çуллахи илем» ят патăм. Тепĕр кунне каллех редакцие чупатăп. Сăвă каллех Петр Афанасьевич Жданкин аллине лекрĕ. Вăл ăна хăвăрт вуласа тухрĕ те:*

*– Ну, Васлей, ку сăвва эсĕ тăрăшарах çырнă пек туйăнать. Ăна хаçатра пичетлеме те юрать пулĕ, - тесе хавхалантарчĕ.*

*Чăнах та, пĕр-ик кунтан манăн «Çуллахи илем» çапăнса та тухрĕ:*

*Хаваслă вăхăт*
*Чуна хыпалать,*
*Ман кăмăла*
*Уя хăвалать...*

*Хаçатра ман сăвă пичетленнĕ! Утмăл йĕрке! Ниçта кайса кĕме пĕлместĕп. Сăвва пурне те вулаттарас килет. Çапла пулмасăр, ара, вăл ман малтанхи чун хĕлхемĕ вĕт!»*

Ялти çичĕ çул вĕренмелли шкула пĕтернĕ хыççăн çамрăк сăвăçа Шупашкарти хаçат шкулне вĕренме яраççĕ. Хайне мăшăр çунат хушнăн туять вăл: вĕрен, тăрăш, кĕреш – пурнăç мĕнле пуласси пĕтĕмпех хăвăнтан килет.

*«Хаçат шкулĕнче литература кружокĕ ĕçлеме пуçларĕ. Кружок занятийĕсенче хамăр тантăшсен, çамрăк сăвăçсен – Порфирий Лукояновăн, Сергей Прокопьевăн, Прокопий Сатурăн – сăввисене итлетпĕр, тишкерсе тухатпăр. Литература кружокне паллă поэтсем, тăван чĕлхе ăстисем Илле Тукташ, Иван Ивник, Уйăп Мишши, Яков Ухсай, Александр Кăлкан, Максим Ястран хăнана пыраççĕ, пире хăйсен сăввисене вуласа савăнтараççĕ.*

*Шупашкарта чĕрем хĕлхемĕ татах та вăйлăрах ялкăшма пуçларĕ. Çамрăклăх, çĕнĕ пурнăç, çĕнĕ самана сăвă-юрă хывма ыйтать. Эпĕ «Колхоз хĕрĕ» ятлă сăвă çыртăм, ăна литература кружокĕнче хамăн тус-юлташсене, çамрăк поэтсене вуласа патăм», – хăйĕн çамрăклăхĕпе малалла паллаштарать вăл «Сатин кĕпе» повеçри «Тăван хуламăрта» калавра.*

1940-1941 çулсенче В.И.Давыдов-Анатри Хĕрлĕ Çарта хĕсметре пулнă. Унтан таврăнсан вăл Первомайски районĕнчи «Коммунар» хаçат редакцийĕнче ĕçлет. Малтан хаçатăн яваплă секретарĕ, кайран редактор пулать. Сăвăсем те çырать, витĕмлĕ сăнарсем тума чăваш халăх сăмахлăхĕнчен, ытти поэтсенчен вĕренсе пырать. Халăх юррисен кĕввиçемми илтĕнет унăн хайлавĕсенче. 1942 çулта çырнă «Çĕршывăмăр-анне» сăвăра та çакă туйăмлă палăрать.

Вăхăтсем хăрушă, эй, атте-анне,
Хаяр тăшмансем тăсрĕç сăннине.
Маттур каччăсем, хастар сар хĕрсем,
Тухар çапăçма пурте пĕрлешсе.

Редакторта ĕçленĕ чухне Василий Иванович хаçат ĕçне ялти корреспондентсене ытларах та ытларах явăçтарма тăрăшать. Çакна çирĕплетме унăн «Юлташсемпе юнашар» кĕнекинче пичетленнĕ «Сăвă хăвачĕ» асаилӳпе те паллаштарас терĕмĕр.

*«1943 çулхи кĕркунне пирĕн пата Первомайски районĕнчи «Коммунар» хаçат редакцине пĕр ватă, сухаллă, типшĕмрех çын пырса кĕчĕ... Вăл мана хăйĕн сăввисене тыттарчĕ.*

*– Эпĕ леш Кашкăр Микули-ха, Çĕрпӳел чăвашĕ, – терĕ. – Фашистсене питлекен сăвăсем çыртăм. Вĕсене «Коммунар» хаçатра пичетлеме май çук-ши?*

*Чылайччен калаçса лартăмăр.*

*– Микула тете, ман сана редакципе типографинче, ВЛКСМ райкомĕнче ĕçлекен юлташсемпе тĕл пултарас килет. Вĕсене ху çинчен каласа парсан, çак çĕнĕ сăвăсемпе паллаштарсан аван пулĕччĕ. Килĕшетĕн-и? – терĕм.*

*– Тархасшăн. Ку вăл маншăн питĕ те кирлĕ, – терĕ Николай Григорьевич.*

*Тĕл пулу çав тери лайăх иртрĕ. Кашкăр Микули хăйĕн сăввисене вуласа пĕтернĕ хыççăн çапла каларĕ: «Эпĕ çамрăк çын мар ĕнтĕ. Темиçе вăрçă инкекне курнă, тӳснĕ çын. Хальхи Отечественнăй вăрçă – халăх вăрçи. Фашистсем пире нихăçан та хăйсен чурисем туса хураяс çук, – терĕ те тепĕр хут хăйĕн «Тĕп пултăр фашист» сăввине вулама пуçларĕ:*

*Çап фашиста ураран,*
*Вăл малалла ан уттăр.*
*Хăйĕн юнлă урипе*
*Пирĕн çĕре ан пустăр...*
*Çап фашиста пуçĕнчен,*
*Арпа пултăр, салантăр.*
*Усал фашист йăхĕнчен*
*Этем чунĕ ан юлтăр...*

*Çак сăвă пурин кăмăлне те кайрĕ. Тĕл пулăва пынă çынсем уншăн ватă çынна, Кашкăр Микулине, пĕтĕм чунчĕререн тав турĕç.*

*Эпир «Тĕп пултăр фашист» сăвва 1943 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче Октябрь уявĕ ячĕпе тухнă «Коммунар» хаçатра пичетлесе кăлартăмăр. Çапла пуçланчĕ «Тĕп пултăр фашист» сăввăн кун-çулĕ, çапла саланчĕ вăл халăх хушшине. Тискер тăшман хĕç-пăшалĕнчен темиçе хут хăватлăрах, çивĕчрех пулчĕ вăл. Ăна халь пирĕн кашни шкул ачи пĕлет».*

Вăхăт нумай та иртмест, В.И.Давыдов-Анатри тăван районпа сыв пуллашать те Шупашкара куçса килет. Вăл каллех юлташĕсен ытамĕнче. Самани йывăр пулин те куллен-кун тенĕ пекех сăвăçсемпе, композиторсемпе, артистсемпе тĕл пулать. Çӳлерех асăннă кĕнекери «Ĕçри тусăм-юлташăм» асаилӳпе паллашар-ха.

*«1943 çулта мана Шупашкара КПСС обкомне ĕçлеме куçарчĕç. Çав çулсенче эпĕ Герман Степанович Лебедевпа часчасах тĕл пулаттăм. Яланах литературăпа искусство çинчен, чăваш сăвви-юррисем çинчен калаçаттăмăр. Пĕррехинче эпĕ ăна хамăн сăввăмсене вуласа патăм.*

*– Çак «Шап-шурă иккен çырла çеçкисем» тăрăх юрă çырма май пур пек туйăнать, – терĕ мана Герман Степанович. Вăл ăна çавăнтах хăй блокночĕ çине çырса илчĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, композитор мана çав сăвва юрра хывни çинчен пĕлтерчĕ, ăна итлеме каçхине хăй патне пыма ыйтрĕ.*

*Эпĕ ун хваттерне хамăр каласса тапăлнă вăхăт тĕлне çитрĕм. Герман Степановичпа Анастасия Львовна питĕ савăнăçлă. Вĕсен ывăл ача çуралнă иккен.*

*– Хăна килнине пирĕн сăпкари ача Юрий те сисет-мĕн. Ав епле хавас, кулса çеç выртать, – терĕ мана Герман Степанович. Вăл çавăнтах пианино умне ларчĕ те хăй çырнă çĕнĕ юррăн кĕввине калама пуçларĕ. Эпĕ ман сăвă тăрăх композитор кĕвĕленĕ юрра пĕрремĕш хут илтетĕп. Хам савăннипе çав тери хумханатăп. Юрă хăйĕн илемлĕ, çепĕç кĕввипе мана тыткăна илчĕ.*

*– Ку юрă хама та кăмăла каять. Çапла, малашне те пĕрле ĕçлер, хамăр сывă чухне тăван халăха çĕнĕ юрăсем парнелер, – терĕ Герман Степанович.*

*Кун хыççăн кун, çул хыççăн çул иртрĕ. Пĕр канмалли кун пирĕн пата Герман Степанович пычĕ.*

*– Эпĕ кунта паян ятарласах Настьăпа килтĕм. Пысăк ĕç пур. Мирпе туслăх çинчен юрă çырмалла, – терĕ вăл мана.*

*Каярахпа эпĕ композитор ыйтнипе «Эпир миршĕн» ятлă сăвă çыртăм. Ăна Герман Степановича вуласа патăм. Сăвă ун кăмăлне кайрĕ пулас. Вăл ăна часрах юрра хыврĕ.*

*Герман Степанович Лебедевпа пĕрле ĕçлеме питех те лайăхчĕ. Вăл яланах ырă, кирлĕ канашсем паратчĕ. Эпир пĕр-пĕрне вăтăр пилĕк çул ытла пĕлнĕ, пĕрле килĕштерсе, туслăн ĕçленĕ. Эп ун сăпайлăхĕнчен, ĕçченлĕхĕнчен яланах тĕлĕнеттĕм.*

*Пултаруллă композиторпа çапла нумай çул хушши алла-аллăн ĕçлесе хĕрĕх ытла юрă, виçĕ сюита çыртăмăр.*

*Герман Степанович çинчен ырăпа ка-*

*ламалли сăмахсем нумай. Хăш-пĕр çынсем юрă çырасси çăмăл ĕç тесе шутлаççĕ. Анчах та вĕсем йăнăшаççĕ. Лайăх юрă çырасси питех те йывăр ĕç.*

*Кун çинчен Герман Степанович:*

*– Юрă вăл çунатлă пулмалла, çынсен чĕринче яланах ырă, ăшă туйăм çуратмалла. Начар юррăн ĕмĕрĕ кĕске. Вăл халăх хушшине çитеймесĕрех вилет. Юрра халăх кăмăлласа йышăнни композиторшăн та, поэтшăн та пысăк савăнăç, – тетчĕ.*

*Эпĕ Герман Степановичпа пĕрле çумăн ларса юрă валли çырнă сăввăмсене мĕн чухлĕ тӳрлетмен-ши, мĕн чухлĕ юсаман-ши? Кашни йĕркере юрланакан, янăракан, шухăша лайăх уçса паракан сăмахсем, тĕрĕс пусăмсем, тулли рифмăсем пулччăр тенĕ. Ку çеç те мар, сăвă пирки хамăр юлташсен, поэтсен, композиторсен шухăш-кăмăлне пĕлме тăрăшаттăмăр».*

В.И.Давыдов-Анатри Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкайăн ырă ятне мĕн ачаранах чĕрере тытнă. Ялти шкулта вĕреннĕ чухнех вăл çырнă сăвăсене юратса вуланă, халăх умĕнче пăхмасăр тухса каланă. 1940 çулта Хĕрлĕ Çарта хĕсметре тăнă чухнех пĕр-пĕрин патне çырусем çӳретнĕ. Эпĕ тӳрех çапла калама пултаратăп: «Мана Митта Ваçлейĕпе Петĕр Хусанкай литература çулĕ çине тăратрĕç», – çырнă каярахпа Василий Иванович.

Кунтах «Юлташсемпе юнашар» кĕнекери «Тăван позин мухтавĕ» сыпăкри йĕркесемпе те паллаштарас килет.

*«Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн, Шупашкара таврăнсан, Петр Петрович ман пата хваттере пычĕ. Эпĕ ăна хамăн çĕнĕ сăвăсене вуласа патăм. Ун чухне поэт мана çав тери усăллă канашсем пачĕ.*

*– Эс çырнă çак сăвăсене вырăсла куçарса пăхам-ха, мĕн пулĕ, – терĕ мана Петр Петрович. Нумай та вăхăт иртмерĕ, вăл манăн «Çĕнĕ ĕмĕт», «Çутă хĕç» сăвăсене вырăсла куçарчĕ. Эпĕ тĕлĕнтĕм: поэт чăвашларан куçарнă сăвăсен виçине, шухăшне лайăх упраса хăварнă. Ку мана питех те савăнтарчĕ».*

Апла пулсан В.И.Давыдов-Анатрин сăввисене чи малтан вырăсла куçараканĕ Петĕр Хусанкай пулнă!

1945-1947 çулсенче В.И.Давыдов-Анатри Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнче радиоинформаци комитетĕнче литературăпа драма передачисен редакторĕнче ĕçленĕ. 1947-1948 çулсенче вăл «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕн районта ĕçлекен корреспонденчĕ пулнă. Ун хыççăн каллех радиоинформаци комитетне ĕçлеме куçнă, унта тĕп редактор ĕçĕсене туса пынă. 1947-1948 çулсенче поэт Шупашкарта учительсем хатĕрлекен институтра вĕреннĕ. Унтан вĕренсе тухнă хыççăн КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн пичет секторĕн инструкторĕнче, Чăваш кĕнеке издательствин аслă редакторĕнче ĕçленĕ. 1958 çулта ăна СССР Писательсен союзне илнĕ. 1959 çултанпа вăл – писатель-профессионал.

1951 çулта поэтăн «Çамрăк ăру» ятлă пĕрремĕш кĕнеки пичетленсе тухать. Ку кĕнекене ача-пăча юррисемпе сăввисем кĕнĕ. 1956 çулта «Пĕчĕк туссем» (ачасем валли çырнă сăвăсем) тата «Ял çĕнелет» (пĕчĕк çеç очерк) кĕнекисем кун çути кураççĕ. Поэт сăввисем хаçат-журналсенче, юрă сăмахĕсем тĕрлĕ юрă кĕнекисенче çапăнса пыраççĕ.

Калас пулать, В.И.Давыдов–Анатрин литературăри çулĕ яланах яп-яка та тумхахсăр пулман. Унăн Аслă Елчĕк çинчен çырнă «Ял çĕнелет» кĕнекине Леонид Агаков писатель хаçатра хытă критиклет. Стихван Шавлы поэт «Поэт чунĕ çунатлă пулмалла» статьяра (Ялав, 1957, 12№) «Çамрăк ăрупа» «Пĕчĕк туссем» кĕнекесенчи сăвă-юрăсене тишкерет. «Пĕлмен куçпа пăхсан Давыдов халăх сăвви-юрринчен нумай вĕренет пек, анчах та ку апла мар çав, вăл халăх юрри майлă анчах çырать çав, кăшт-кашт перопа тĕккелет, «çĕнеткелет» вăл вĕсене, анчах та

не, вӑрӑсене, ӗҫкӗ-ҫикӗпе иртӗхекенсене питлет.

– Тӑван ҫӗршывӑма, тӑван чӑваш халӑхне юратнӑ туйӑм, ӗмӗт-тӗллевсем, чун-чӗре хӗлхемӗ манӑн пӗтӗмпех сӑввӑм-юррӑмра, – тет мухтавлӑ та хисеплӗ поэтӑмӑр. – Маншӑн та кашни чӑваш ҫыравҫи хаклӑ. Эпӗ паян кун ватӑ поэтсенчен пӗри. Чӑваш литературинче нумай ырӑ ӗҫ турӑм тесе мухтанма пултараймастӑп. Ҫапах та Ҫут ҫанталӑк - Туррӑмӑр мӗн пӳрнине пӗтӗмпех тӑван халӑхӑмӑра парассишӗн тӑрӑшрӑм. Хама аслӑ ҫыравҫӑсем яланах пулӑшса пынине асра тытса тӑван литературӑри шӑллӑмсемпе йӑмӑксене пӗрмай ҫывӑх курса пурӑнтӑм, вӗсене литературӑн ҫӑмӑл мар ҫулӗнче кирек мӗнле ларутӑрура та ӑшӑ сӑмах калама тӑрӑшрӑм. Ҫунат сарса пысӑк вӗҫеве тухма вӑхӑт ҫитсен Геннадий Айхине, Михаил Сениэле, Петӗр Ялгире, Николай Теветкеле, Раиса Сарпине, Денис Гордеева, Геннадий Юмарта, Николай Исмукова, Сергей Юшкова, Аристарх Дмитриева, Александр Тимбая, Николай Кушманова тата ытти ҫыравҫӑсене писательсен союзне кӗме рекомендаци патӑм. Асӑннӑ юлташсем ман шанӑҫа ӗҫпе тӳрре кӑларса пыни мана савӑнма та, мухтанма та ирӗк парать...

Чӑваш литературипе культурине аталантарас ӗҫри ҫитӗнӳсемшӗн В.И.Давыдов-Анатрие Чӑваш халӑх поэчӗ ятне, РФ тата ЧР культурӑн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ ятне панӑ. Вӑл Шупашкар хулин хисеплӗ гражданинӗ, Халӑхсен Туслӑхӗн орденне, медальсем илме тивӗҫлӗ пулнӑ. Поэт республикӑри ҫамрӑксен пӗрремӗш фестивалӗн лауреачӗ. Ӑна Митта Ваҫлейӗ ячӗллӗ преми парса чыс тунӑ.

Эпир хаклӑ поэтӑмӑра юбилей ячӗпе чӗререн саламлатпӑр, ҫирӗп сывлӑх, хавхалану, ҫӗнӗ юрӑсем ҫырма иксӗлми вӑй-хал сунатпӑр.

**Герман ЖЕЛТУХИН,**
**Афиноген КУЗЬМИН**